Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Александр Алексеевич Галкин**
**Книга: Çунатлă Улăп=Крылатый Улып**
**Сказка: Шапасем мĕншĕн пакăрти?**

Ĕлĕк Шапа та кайăк евĕрлĕ чĕрчун пулнă, тет. Çуначĕ те, хӳри те, тĕпекĕ те ытти кайăксенничен пит уйрăлсах тăман, тет. Сасси те унăн хăйне кура самай янăранă-мĕн. Çавăнпа вăл пĕррехинче Шăпчăкпа тавлашса кайнă – хăшĕ хитререх юрланине пĕлме шутланă. Хăйсем юрланине итлеме Саркайăка чĕнне. Пуçланă вара юрлама! Кĕркунне çитсен тин чарăннă, тет.

– Ну, кам хитререх юрлать? – чăтăмсăррăн ыйтнă Шапа тимлĕн итлесе ларакан Саркайăкран.

Саркайăк нумай шухăшласа тăман, Шапа енелле кăмăлсăррăн пăхса игнĕ те:

– Шăпчăкпа тавлашичен Ашакпа тавлашас пулнă сан, вара, тен, çĕнтернĕ пулăттăн… – текелесе, аяккалла вĕçнĕ те куçран çухалнă.

Куна илтсен, Шапа çав тери хаярланса кайнă, çиллине ниçта шăнарайманнипе тӳрех Шăпчăк çине сиксе ӳкнĕ… Аран вĕçерĕнсе тарнă Шăпчăк урса кайнă Шапаран. Вĕçерĕннĕ те кӳренсе-хурланса кăнтăраллах ăсаннă… ăпчăк сассипе хавасланса, хавхаланса тăнă пĕтĕм тавралăха вара тунсăх пусса илнĕ.

Кĕçех çак хыпар кайăксен патши патне – çитнĕ. Шапана вăл хăвăр хăй керменне чĕнтернĕ.

– Кала-ха эс манна, эсрел măйраки… мĕншĕн ăпчăк юрри илтĕнми пулчĕ? ыйтнА вăл хаяррăн.
Шапа хăранипе хускалмиех пулса ларнă:

– Эп мĕн…эп… – тенĕ вăл, ним калама аптăраса. – эп ăна – ытлаши çухăраснăшăн çеç кăшт ассăрхаттарас терĕм. Ӳама кирлĕ унашкал çихĕрни. Йăлăхтарсах çитерчĕ вĕт, çывăрма та памасть, унăн сасси çеç хăлхара янăрса тăрать. Йĕркеллех юрласчĕ хуть!.. Вăт, манăн сассăм! Илтсен тĕлĕнсе пĕтереймĕр…Вăл никама та кӳрентерес çук…

Анчах Ăмăрткайăк ăна юрлама паман. Ярса тытнă та Шапан пĕтĕм тĕкне татса пĕтернĕ, çуначĕсене тăпăлтарса илнĕ, хăйне, çан-çара тăрса юлнăскерне, пĕр тарăн шурлăха вăркăнтарнă.

– Ав, унта юрла, пăкăртатах тăраниччен! – тенĕ Ăмăрткайăк, чĕрнисене тĕксенчен тасатнă май.

Çак кунран пуçласа илтĕнме тытăннă та ĕнте шурлăхсенчен пакăртни сасăсем. Шапасем кăваклатаççĕ ăна – хăйсене шурлăхсенчен пакăрти сасăсем. Шапасем кăваклатаççĕ ăна – хăйсене шурлăха пурăнма куçарнăшăн тарăхнипе măкăртатаççĕ. Ĕненместĕр пулсан, хăвăр итлесе пăхăр.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.